ХЫПАР

# КИЛ-ÇУРТ, ХУШМА ХУÇАЛĂХ

1999 çулхи утă уйăхĕн 30-мĕшĕнче тухма пуçланă

49 (846) №, 2015, раштав/декабрь, 10 Хакĕ ирĕклĕ

12+

## ШУПАШКАРТИ ТĔП ПАСАРТИ ХАКСЕМ

/раштав уйăхĕн 9-мĕшĕ тĕлне/

| ПАХЧАÇИМĔÇ | |
|---|---|
| *Килограмм* | *тенкĕ* |
| Çĕрулми | 14 |
| Купăста | 16 |
| Сухан | 25 |
| Кишĕр | 25 |
| Ыхра | 200-220 |
| Хăяр | 60-100 |
| Кавăн | 30 |
| Хĕрлĕ кăшман | 25 |
| Помидор | 50-100 |
| Пылак пăрăç | 70-100 |
| Тăварланă хăяр | 130 |
| Йӳçĕтнĕ купăста | 100-120 |
| Баклажан | 75 |
| **УЛМА-ÇЫРЛА** | |
| Панулми | 35-80 |
| Иçĕм çырли | 55-80 |
| Апельсин | 60-100 |
| Лимон | 110-140 |
| Банан | 55 |
| Мандарин | 80-100 |
| Слива | 70-90 |
| Гранат | 150-180 |
| Хурма | 65-90 |
| Сырлан /облепиха/ | 200 |
| Кĕтмĕл çырли | 160 |
| Шур çырли | 160 |
| **ÇĂНĂХ-КĔРПЕ** | |
| Тулă çăнăхĕ | 25 |
| Вир кĕрпи | 35 |
| Хуратул -»- | 62-66 |
| Тулă -»- | 32 |
| Манна -»- | 32 |
| Рис -»- | 59 |
| * * * | |
| Сахăр песукĕ | 50 |
| Пыл | 350-450 |
| **АШ-КАКАЙ** | |
| Ĕне ашĕ | 200-380 |
| Сысна ашĕ | 200-380 |
| Сурăх ашĕ | 180-300 |
| Пĕвер | 150-200 |
| Пӳре | 65-80 |
| Чăх | 250 |
| Хур | 350-400 |
| Кăвакал | 350-400 |
| Кăркка | 350-400 |
| Кролик | 350 |
| * * * | |
| Çăмарта /теçетке/ | 50-68 |
| **ПУЛĂ** | |
| Шăнтнă скумбри | 200 |
| -»- сельдь | 180 |
| Мойва | 160 |
| Треска | 250 |
| Горбуша | 250 |
| Шăла пулă /судак/ | 200 |
| Çупах /лещ/ | 100 |
| Карп | 200 |
| Çуйăн /сом/ | 220 |
| Налим | 200 |
| **СĔТ-ТУРĂХ** | |
| Сĕт /литр/ | 35-40 |
| Хăйма | 220 |
| Тăпăрч | 200-220 |
| Сыр | 350 |
| Услам çу | 220 |



# Пусă çаврăнăшне тĕрĕс йĕркелемелле

Тепĕр чухне «пĕчĕк лаптăкра пусă çаврăнăшĕ пирки калаçни пуш сăмах çеç. Йăрансем пурпĕрех хутăш, унта пусă çаврăнăшне йĕркелесе тăраймăн» тенине илтме пулать.

Çакна каламалла – йăрансене пĕлсе йĕркелесси пĕчĕк пахчашăн та пысăк пĕлтерĕшлĕ. Вĕсене шăпах пусă çаврăнăшне тĕпе хурса йĕркелемелле, пĕр-пĕрне пулăшакан ӳсен-тăрана кӳршĕлентермелле, черетлентермелле.

Черетлентерӳ ним çукран сиксе тухман. Кашни ӳсен-тăранăн уйрăмлăхне тĕпе хурса мĕнле чир-чĕрпе аптăранине, мĕнле хурт-кăпшанкă тапăннине, тăпра хăйнеевĕрлĕхне палăртса йĕркеленĕ ăна. Йăран черетленĕвĕ пахчари тăпра пулăхлăхне кирлĕ пек шайра тытма, ӳсен-тăрана кирлĕ пулăхлăха тĕрĕс шайлаштарма май парать.

Черетлентерес ĕçе мĕнрен пуçламалла-ха?

Ĕçе пахча планне тунинчен тытăнмалла. Унта кил-çуртри хуралтăсене, хĕвел лайăх ӳкекен вырăнсене, çилтен хӳтĕ енсене палăртмалла. План тунă чухне йывăç-тĕм пахчаçимĕç йăранĕсенчен мĕнлерех инçĕшĕнче вырнаçнине, кун каçиччен йывăç-тĕм пахчаçимĕçе хăш вăхăтра сулхăнлатнине шута илмелле.

Ял хуçалăх культурисен пысăк уйрăмлăхĕ – тĕрлĕ культура тăпраран тутлăхлă япаласене тĕрлĕрен туртни. Пахчаçимĕç культурисене тутлăхлă япаласене мĕнлерех туртнине кура 3 пая пайлама пулать:

1. Пулăхлăха вăйлă пĕтерекеннисем: çĕрулми, купăста, кавăн, шпинат, сельдерей, кабачок, спаржа.

2. Тăпрари пулăхлăха вăтам виçепе туртаканнисем: баклажан, хăяр, хĕрен, порей-сухан, кăшман, явăнса ӳсекен фасоль, томат, кишĕр.

3. Тутлăхлă япаласене сахал туртаканнисем: тĕмлĕ фасоль, пăрça, салат, редис, сухан, техĕмлĕх курăкĕсем.

Пусă çаврăнăшне йĕркелемешкĕн усă курмалли çĕр лаптăкне 3 е 4 пая пайламалла. Ака çаврăнăшĕн йĕркипе «нумай çиекен» пахчаçимĕçсене чи пулăхлă вырăнсене лартмалла. Малтан тăпрана кирлĕ удобренипе пулăхлатмалла. Кĕл, хăйăр тăпра тытăмне лайăхлатма кирлĕ. Пахчаçимĕçе туса илнĕ хыççăн сидерат культурăсем акни аван. Вĕсем тăпрана тислĕк сапнă пекех пулăхлатаççĕ.

Пахчан иккĕмĕш пайне сухан, редис, помидор, пăрăç, ешĕл çимĕç ӳстерме палăртмалла. Унтан – 3 пай. Ăна кишĕр, çарăк, петрушка, кăшман валли уйăрмалла. Кусем тăпрана тиркеменнисем. Тăпра тăмлă пулсан чавнă е сухаланă чухне хăйăр сапса хăвармалла. 4 пайĕ – çĕрулми лаптăкĕ. Ăна лартнă чухне кашни çĕрулми тĕпнех кĕл, лайăх çĕрнĕ тислĕк сапса пымалла. Тепĕр çулхине пĕрремĕш лаптăкри пахчаçимĕçе тăваттăмĕшне акатпăр-лартатпăр. Иккĕмĕш лаптăкри ӳсен-тăрана – пĕрремĕшне, виççĕмĕшĕнчине – иккĕмĕшне. Çапла вара пусă çаврăнăшĕ 3-4 çулта çаврăнса çитет.

Хăш-пĕр культура тăпрана азотпа пуянлатнине палăртмалла. Тĕслĕхрен, клевер тăпрана пăрçапа танлаштарсан 2,5 хут, люцерна 5 хут вăйлăрах пуянлатать. Нумай çул ӳсекен ешĕл çимĕç – эстрагон, ревень, щавель, спаржа, нумай çул ӳсекен сухан – пирки те манмалла мар. Вĕсем ытларахăшĕ – сулхăна юратакансем, йывăç е хуралтă мĕлки ӳкекен вырăна акма юрать. Нумай çул ӳсекен курăк-тĕмсен те пĕр тĕлте чылай ӳснĕ майăн тухăçĕ пĕчĕкленет – вĕсене урăх вырăна куçарса лартмалла. Малтанхи вырăна 3-4 çултан тавăрма юрать. Çав вăхăтра тăпра «канать».

Пусă çаврăнăшне йĕркеленĕ чухне вĕсем тăпраран тутлăхлă япаласене мĕнлерех илсе тăнине çеç мар, пĕр йышши культурăсем юнашар е пĕр-пĕрин хыççăн пулассине те асра тытмалла. Пĕр йышшисем, тĕслĕхрен çĕрулмипе помидор – иккĕшĕ те фитофторозпа сиенленеççĕ. Вĕсене пĕр-пĕрин хыççăн лартма юрамасть.

Суханпа кишĕр вара пĕр-пĕринпе килĕштереççĕ. Иккĕшĕ те вĕтĕ тымар шăнипе сиенленессĕ пулин те хирĕçле витĕм: сухан шăни кишĕр шăршинчен хăрать, кишĕр шăни – суханран. Суханпа кишĕре пĕр йăрана йĕркесене черетлентерсе акни иккĕшне те меллĕ. Çурла уйăхĕ тĕлне сухана пуçтарса илеççĕ, кишĕрĕн ӳсмелли тапхăрĕ вара малта-ха, вăл ирĕкленет.

Хутăш йăрансем тăпрана «ывăнасран» упраççĕ. Кун пек чухне сиенлĕ хурт-кăпшанкă тĕрлĕ шăршăна пула хăйне кирлине тупаймасть. Хутăш йăрансене пĕлсе йĕркелесен вĕсем пĕр-пĕрне тĕреклĕх кӳреççĕ, пулăшаççĕ. Йăрансен хушшинчи чечек йĕркисем те пахчана «çутă» сăн кĕртеççĕ. Кун пек пахчара çимĕç те савăнтарать, куç илемĕ те кăмăла тултарать.

## Халăх сăнанинчен

■ *Раштав – хĕле хапха уçса кĕртет, шыв урлă çул хывать.*

■ *Çак уйăхра юр çумарĕ-тĕк çуркунне çумăрсăр килет.*

■ *Уйăх янкăр курăнать – çанталăк сивĕтет.*

■ *Раштавăн 3-мĕшĕнче юр çусассăн утă уйăхĕн 3-мĕшĕнче çумăр çăватех.*

■ *10-мĕшĕнче тӳпене сăнамалла. Пĕлĕтлĕ пулсан – юр çăвасса. Тӳпе таса тăрсан – юр хĕлле сахал çăвать, хаяр сивĕсем пулаççĕ.*

■ *14-мĕшĕнче чухăн çынна пулăшмалла – çĕнĕ çул ăнăçу илсе килĕ.*

## Пӳлĕмри чечексем

### Вĕтĕ кăпшанкăран

Пӳлĕмри чечексене вĕтĕ курăк пыйти ернĕ-и? Çак сĕнӳсемпе усă курса пăхăр.

**1. Хуçалăх супăньне** хырса ăшă шывра ирĕлтермелле, унпа ӳсен-тăран çулçисен аялти енне тĕплĕн пĕрĕхмелле. Меслет пыйтă вăйлах ĕрчемен чухне лайăх пулăшать.

**2. Махорка, табак.** 40 г хатĕр махоркăна е çулçине пĕр литр шыва ямалла, 2-3 кун лартмалла. Унтан марльăпа сĕрмелле те пĕр литр шыв хушса чечеке пĕрĕхмелле.

**3. Йывăç кĕлĕ.** Çур стакан кĕле 1,5 литр шыва ярса пăтратмалла, унтан хуçалăх супăньне хырса 10 г ямалла. Кăпшанкă пĕтиччен, 2-3 хут, пĕрĕхмелле.

**4. Сухан хуппи, ыхра, помидор çулçи** /çук пулсан унсăрăн та юрать/. Пĕр литр вĕрекен шыва асăннă япаласене яратпăр та талăк тытатпăр. Эрнере пĕр хутчен пӳлĕмри ӳсен-тăрана пĕрĕхетпĕр.

## Кун мĕнпе паллă

**Раштав, 10.** Пĕрлешнĕ Нацисен Пĕрлĕхĕн /ООН/ палăртнипе Этем прави кунĕ. Нобель премине тивĕçнисене преми памалли кун. Чыслав Швецире иртет.

**Раштав, 11.** Ту-сăртлăхăн пĕтĕм тĕнчери кунĕ. Танго ташшин кунĕ.

**Раштав, 12.** Раççей Федерацийĕн Конституцийĕн кунĕ.

**Раштав, 14.** Чернобыльти АЭС аварине сиенсĕрлетме хутшăннисене чысламалли кун.

**Раштав, 15.** Ĕç тивĕçĕсене пурнăçласа вилнĕ журналистсене асăнмалли кун. Пĕтĕм тĕнчере – чей кунĕ.

**Раштав уйăхĕн 12-мĕшĕччен**

**"Хыпар" Издательство çурчĕн мĕнпур кăларăмне йӳнĕ хакпа çырăнтараççĕ.**

**"Хыпар" – 570,30** */индекс Д4800/,*

**"Хыпар-эрнекун" – 297,84** */индекс Д8353/,*

**"Кил-çурт, хушма хуçалăх" – 183,18 тенкĕ** */индекс Д4806/*

## Аш пĕçернĕ чухне

● Вагă чăхха çак меслетпе хăвăртрах пĕçерме пулать. 30-40 минут вĕретнĕ хыççăн какая вĕрекен шывран кăлармалла та 10 минута сивĕ шыва ямалла.

● Аш хытăрах пулсассăн ăна кваcра е йӳçĕтнĕ сĕтре, хăяр, купăста маринадĕнче тытсассăн лайăх çемçелет.

## Вулакансем ыйтнипе

# Ыхра – пылак пахчаçимĕç-и?

**Ыхрара 20% сахăр теççĕ. Анчах вăл мĕншĕн тутлă мар?**

**Станислав КОРОТКОВ.**
Етĕрне районĕ.



Тĕлĕнмелле те, ыхра чăнах та пысăк пылаклăхлă пахчаçимĕçсен йышĕнче. Унăн сĕткенĕнче 20% сахăр пулнине палăртаççĕ ăсчахсем. Ыхрара аллиин – чĕпĕтекен япала – нумай. Çавна пула эпир ыхра пылаклăхне туяймастпăр.

Ыхрапа этем сĕм авалтанах усă курнă. Гиппократ ӳпке шыççан /пневмонирен/, вар-хырăм чирĕсенчен, тĕрлĕ шыçăсенчен ыхрапа сипленме сĕннĕ.

Ĕлĕкхи халапсенче усал вăйсене, асам-тухатăва ыхра тасатать тени те унăн микробсемпе кĕрешес витĕмлĕхĕпех çыхăнтарма пулать-тĕр. Çынсем ыхрапа усă куракансем сахалрах чирленине, çирĕп сывлăхлине асăрханă: тĕлĕнтермĕш хăват пур тесе ĕненнĕ. 19-мĕш ĕмĕрте Луи Пастер ăсчах ыхра инфекцие хирĕç витĕмлĕ пулнине наука енчен çирĕплетнĕ.

Ыхрари аллиин вещество каснă майăн аллицина çаврăнса пенициллин пекех микробсене пĕтернине наука 20-мĕш ĕмĕрте çирĕплетнĕ.

Ыхра кăмпа чирĕсенчен те, шĕвĕрĕлченрен хăтăлма та пулăшать. Суханпа танлаштарсан ыхра гастрит-язва чирĕсемпе нушаланакансемшĕн те юрăхлă. Ыхра хырăмлăха сиен кӳмест.

Хальхи тĕнче çынран ыхра шăрши кĕнине юратмасть. Шăршăна пĕтерме ыхраллă апат çинĕ хыççăн гвоздика пĕрчи, пĕтнĕк, тимьян çулçи чăмлама сĕнеççĕ. Çавăн пекех петрушкăпа кинза та ыхра шăршине пусараççĕ. Ыхра çинĕ хыççăн икĕ-виçĕ хутчен сĕт сыпса çăварта тытса çăтни те шăршăран хăтăлма пулăшать.

## Пахчаçă валли

# Шупка хĕрлĕ, кĕрен помидорсем çинчен

Иртнĕ номерте вулаканăн ыйтăвне хуравласа «черри» помидорсем çинчен çырса кăларнăччĕ. Ку номерте ыйтăвăн иккĕмĕш пайне хуравласа шупка хĕрлĕ, кĕрен помидорсем çинчен сăмах тапратăпăр. Черри помидорсем вĕтĕ те йышлă пулсан, «розовые» текеннисем – шултра. Шăпах кĕрен помидорсен йышĕнчен чи пысăк чемпионсем. Кĕрен помидорсем тата чи тутлисем, тĕрлĕ витаминпа пуяннисем шутланаççĕ. Паллах пăхма кăшт кăткăсрах: вĕсем ачашрах, çӳхе хупăллă, фитофторăпа вăйлăрах сиенленме пултараççĕ. Анчах усăллă та тутлă томат пахчаçă тимлĕхне тӳрре кăларатех. Пылак, витаминпа, минералпа, антиоксидантпа пуян помидор вар-хырăм чирĕсемпе аптракансемшĕн те юрăхлă. Вĕсенчи йӳçеклĕх пĕчĕк.

Кĕрен помидорсем кăмпа чирĕсемпе час-часах сиенленнине пула помидор калчине усă çĕре лартас умĕн тăпрана фитофторăран сиплемелле. Сиплемелли хутăша хатĕрлемелли рецепт: 4 апат кашăкĕ горчица çăнăхне 100 г лĕп шыва ярса пăтратмалла, 2 чей кашăкĕ натри карбоначĕ, 1 чей кашăкĕ нашатырь спирчĕ, 100 г пăхăр купоросне 1 литр шывра ирĕлтермелле те пурне те 10 литр шыва ярса хутăштармалла. Çак виçе 10 тăваткал метр лаптăка пĕрĕхме çитет. Тăпрана помидор калчине лартиччен пĕрĕхмелле. Çимĕç пысăк пулнине кура помидора нӳрĕк çителĕклĕ кирлĕ. Тăтăш шăварса тăпрана ытлашши йĕпетессинчен те асăрханмалла. Çимĕçсем тытăнма пуçласассăн кали, фосфор удобренийĕсемпе апатлантармалла.

Кĕрен помидорсем те лутрисем, вăтам çӳллĕшлисем, çӳллисем пулаççĕ. Таса сортлă помидорсем тата гибридсем. F1 тесе палăртнă хутаçри вăрлăха аксассăн çимĕçрен килте вăрă хăварма юрамасть.

Гибрид помидорсем лайăх тухăç параççĕ. «Виктория», «Дебютантка», «Вернисаж», «Розовый спам» гибридсен çимĕçĕнче сахăр шайĕ – 60%, С витамин та нумай. «Розовый спам» «Бычье сердце» евĕрлĕрех, хĕрхĕлтĕм /оранж/ тĕслĕ, çимĕçĕсем пысăк – 300 г таяççĕ.

Селекционерсем кăларнă шултра помидорсен çĕнĕ гибричĕсем чир-чĕре тӳсĕмлĕ. Вĕсем: «Тарпан», «Розовый фламинго», «Цунами», «Шустрик», «Бобкат», «Розовые щечки».

Лутра /детерминат/ гибрид Цунами янкăр кĕрен тĕслĕ, тутлă, салат хатĕрлеме лайăх. Тăсмакрах çавра, хăвăрт пулаканскерĕн çимĕçĕсем 350 г яхăн.

Розовый фламинго салатсем тума, консервлама аван. Вăл вăтам тапхăрта пулаканни, çӳллĕ, çимĕçсем слива евĕрлĕ, кĕрен тĕслĕ, 100-130 г таяççĕ.

«Июнь розовый», «Рассвет Роуз», «Розовый мед» – томатсем 90-100 кунра пулса çитеççĕ. Вĕсем пирĕн тăрăхра лайăх çимĕç пама пултараççĕ. Çимĕçĕ шултра, тухăçĕ аван. Паллах, ытти помидор пекех вĕсене çуркунне калчалантарса лартмалла. Калчана усă вырăна лартиччен пиçĕхтермелле. Ытти йышши помидора пăхнă пекех пăхмалла. Тимлесессĕн пахча тухăçĕпе ĕçлекене савăнтаратех.

# Дивана хамăрах юсатпăр

**Диван пичĕ кивелни ăна кăларса пăрахмалли сăлтав мар – çĕнетмелли сăлтав. Çĕнĕ пусмапа сăрса дивана çĕнетсе илемлетме пулать. Çĕнĕ пусма сăрнă чухне унăн формине те кăштах улăштарма май пур.**

Çак ĕçе тума специалистсене тытсан самаях тăкакланма тивет. Тĕрĕссипе вара, хăш-пĕр вăрттăнлăхсене пĕлсен, кивĕ дивана çĕнетесси пит кăткăсах та мар.

Ĕçе пуçличчен дивана лайăх тĕрĕслемелле: унăн пайĕсем, пружинисем пăсăлман-и? Вĕсем хытах пăсălнă пулсан дивана çĕнетесси кăлăх ĕç, çĕннине туянни лайăхрах. Юсама шутларăр-тăк кирлĕ вĕтĕр-шакăра туянмалла. Сăрмалли пусма гобелен е велюр пулсан аванрах. Унăн сарлакăшĕ пĕр метр çурă, вăрăмăшĕ 7 метр кирлĕ.

Кирлĕ ытти япаласем: çирĕп пусма – 2 метр, пальто çĕлемелли пусма – 3 метр, икĕ кивĕ çăм утиял, палас – 1,5-2 метр, поролон – аякĕсене çĕнетсе улăштарма, капрон çип, хĕреслĕ тимĕр шпунтсем, саморезсем, фанера, сĕтел-пукан степлерĕ, çилĕм, цинкланă пăралук /0,16 см диаметрли/.

Чи малтан дивана пайлама пуçлатпăр. Кашни пайне кăранташпа çырса палăртатпăр /номерлетпĕр/. Ку дивана пуçтарнă чухне арпашăнасран кирлĕ. Хăш-пĕр пайĕсем пăсăлнă пулсан çĕннипе улăштармалла. Унтан дивана каялла пуçтарма тытăнатпăр. Кашни пайне çилĕм сĕрсе шпунтпа çирĕплетмелле. Кивĕ детальсене шаблон пек усă курса фанертан юрăхсăра тухнă пайсене касса кăлармалла, степлерпа çилĕм сĕрнĕ диван хапи /каркас/ çумне çирĕплетмелле, çиелтен утиялпа витмелле. Пружинăсем çирĕпех-и? Тĕрĕслемелле, кирлĕ пулсан çирĕплетмелле. Унтан пружинăсене паласпа витетпĕр. Кирлĕ виçерен 4-5 сантиметр пысăкрах илсе касатпăр, усăнмалла хуратпăр, 5 сантиметрлă сăхăмпа çĕлесе тухатпăр. Унтан палас çине кивĕ утияла хуратпăр. Вăл паласа хупласа тăмалла. Диван чехолне маларах хатĕрлемелле, ăна кивĕ диван çийĕпе калăпласа çĕлеме пулать. Çĕлемелли çип питĕ çирĕп пулмалла. Чехола диван айĕнчи хашакĕ çумне степлерпа çирĕплететпĕр.

Диван аякĕсене хăвăра кирлĕ пек улăштарма поролон е синтепон пулăшать. Малтан пальто пусмине диван аякĕн айĕнчен çирĕплетсе сăратпăр, поролона кирлĕ пек хурса тытăнтаратпăр: унтан хатĕрленĕ чехола тăхăнтартатпăр, аякĕсене тĕп хапи çумне çирĕплететпĕр. Диванăн хыçал енне те пусмапа сăратпăр, чавсаланмалли /подлокотник/ пур пулсан ăна çирĕплететпĕр.

Юсав ăнăçлă пулсан хăвăр алăпа çĕнетнĕ япала мăнаçлăх кӳрет, тата темиçе çул хăтлăхĕпе савăнтарать.

## Тĕпелте чухне

### Ăшне тултарнă çăмарта

**Пĕçернĕ 4 çăмарта, çур банка пулă консервĕ, 1 чей кашăкĕ горчица, майонез, кетчуп, илемлетме ешĕл çимĕç тата помидор кирлĕ.**

Çăмартана çурмалла туса касмалла, саррисене илмелле. Консерва çăмарта саррипе хутăштарса нимĕрлемелле, горчица, 1-2 апат кашăкĕ майонез хушмалла. Çăмарта шурри ăшне çак хутăша тултармалла, сарлака турилкке çине вырнаçтармалла. Кашнинех майонез сĕрмелле, кăштах çеç кетчуп тумлатмалла.

Çăмартана ешĕл çимĕçпе, помидор турамĕсемпе илемлетмелле.

### Апельсинри улма-çырла

**Пысăк 3 апельсин, пĕр сапака иçĕм çырли, 1-2 панулми, 2-шер бананпа киви, çур стакан хăйма, 2 апат кашăкĕ сахăр çăнăхĕ, ванилин е корица, тикĕт курăкĕ /гвоздика/ тата гранат пĕрчисем кирлĕ.**

Хăймана сахăр çăнăхĕпе кăпăшлантармалла, ванилин е корица хушса сивĕтмĕше 15-20 минутлăха хумалла. Банана, кивине тата панулмине пысăках мар касăксем туса вакламалла. Апельсина 2 пая касмалла, ăшне асăрханса кăлармалла. Ăна пĕчĕк турамсене пайламалла, çурхахне сӳсен лайăхрах. Апельсин карçинккине хăйма соусĕ ямалла, панулми касăкĕсене, ытти улма-çырлана хумалла. Апельсин хуппине тул енчен – гвоздика пĕрчисемпе, салата çиелтен гранат пĕрчисемпе илемлетмелле. Улма-çырла салатне çиме парас умĕн çеç хатĕрлемелле.

# Пĕлни пăсмасть

- Яшка тутлă пултăр тесен пахчаçимĕçе сивĕ шыва ярса пĕçермелле.
- Кишĕр е лимон касăкне кăлпасси касăкĕ çине хурсан икĕ çимĕçĕ те сивĕтмĕшре вăрах вăхăт аван упранĕç.
- Рис пĕрчĕллĕ пиçтĕр тесен ăна пĕçерме лартиччен çур сехет сивĕ шывра тытмалла. Тухăç халăхĕсем плов пĕçернĕ чухне çакнашкал тăваççĕ.
- Сĕт вĕретнĕ чухне кастрюль тĕпне çунса ларасран савăта сивĕ шывпа чӳхемелле, вăйлă мар çулăм çинче 1-2 катăк сахăр ярсассăн вăл тухса тармасть.

# Çанталăк

| | кăнтăрла | çĕрле |
|---|---|---|
| 10.12 | 0 | + 2 |
| 11.12 | 0 | – 2 |
| 12.12 | – 2 | – 3 |
| 13.12 | – 1 | – 3 |
| 14.12 | – 1 | – 2 |
| 15.12 | – 5 | – 8 |
| 16.12 | – 5 | – 4 |

| | Кун тăршшĕ | Уйăх кунĕ |
|---|---|---|
| 10.12 | 07.04 | 29 у.к. |
| 11.12 | 07.02 | Çĕнĕ уйăх |
| 12.12 | 07.01 | 2 у.к. |
| 13.12 | 06.00 | 3 у.к. |
| 14.12 | 06.58 | 4 у.к. |
| 15.12 | 06.58 | 5 у.к. |
| 16.12 | 06.57 | 6 у.к. |

Кун тăршшĕ 6 сехет те 57 минут, 10 сехет те 38 минут кĕскелет. Çĕнĕ уйăх пулать.

## Уяв тĕлне

# Тетте-чăрăш ăсталар-ха

**Çĕнĕ çул уявĕн палли – капăрлатнă чăрăш – хăй вăхăтĕнче нимрен те паха. Уяв тĕлне унпа илемлетмен кил-çурт сахал пулĕ. Хăшĕ чĕрĕ чăрăш туянса лартать, тепри искусственнăйне капăрлатса уяв сĕмĕ кĕртет. Чĕрĕ чăрăш туянса лартасси нумай чухне укçа-тенкĕпе çеç мар, пӳлĕмре ларнăскерĕн тăкăнакан лăсă чăрмавĕпе те çыхăннă. Паллах, пӳртре лартнă хыр-чăрăшăн ырă шăршине нимпе те улăштарма çук. Вăл кăмăла çĕклет, хăпартлантарать. Уяв иртнĕ хыççăн вара икĕ-виçĕ уйăх кавир-палас, плинтус айĕнчен чăрăш йĕппи пуçтарма тивет. Мĕнле чăрăш киле капăрлатасси харпăр кăмăлĕнчен килет.**

**Кил-тĕрĕшри ал айĕнчи япаласенчен пĕчĕк чăрăш ăсталаса пăхар-ха.** Вĕсем ансат пулин те илĕртӳллĕ. Хутран – чăрăш. Картуна е хута çавăрса чĕркетпĕр те конус тăватпăр. Степлерпа е çилĕмпе çыпăçтарса çирĕплететпĕр. Тĕрлĕ тĕслĕ хутран хăюсем касса кăларатпăр, пĕркелентерсе конус çумне ретĕн-ретĕн çыпăçтаратпăр. Симĕс хăюсене пĕрре е икĕ рет сиктерсе, аялтан çыпăçтарса хăпармалла. Тепĕр «чăрăша» та конусранах хатĕрлетпĕр. Ăна симĕс тĕслĕ картунран тăватпăр, çавăн тĕслĕ хутранах конус вăрăмăш хăюсем касатпăр. Вĕсен аялти пайĕ анлăрах, çӳлти çинçерех пултăр. Хăюсене конус çине тăрăхла ярăмсемпе çыпăçтаратпăр, хĕррисене авса çыпăçтармасăр хăваратпăр. Чăрăша çилĕмпе сĕрсе вĕтĕ шăрça /бисер/, тĕрлĕ йăлтăркка, мишурана хачăпа вĕттĕн касса сапса çыпăçтаратпăр.

**Шурă чăрăш.** Шурă хутран конус тăватпăр та ăна çилĕмпе сĕретпĕр, шултра пĕрчĕллĕ сахăр песукĕ, шултра тăвар е пенопласт пĕрчи сапса çыпăçтаратпăр. Çиелтен симĕс е кăвак сăрăпа кăштах сирпĕтетпĕр. Шурă «юр» /мамăк/ çине лартатпăр.

Асăрхарăр пулĕ – «чăрăшсене» пурне те конуспа тумалла. Кунашкал теттесене хăвăр фантази çитнĕ пек тата тĕрлине те ăсталама пулать.

**Симĕс пластик савăтран – чăрăш.** Ăна валли 2-3 пластик савăт кирлĕ. Савăтăн тăррине касатпăр – вăл чăрăш туни пулать. Пластик савăтăн тĕпне касса пăрахатпăр, юлнине тăрăхла çуратпăр, хăюсем касса кăларатпăр. Хăюсене çинçен йăрăм-йăрăм касатпăр – чăрăш турачĕсем пулаççĕ. Унтан шерепеллĕ хăюсене çавăрса чĕркетпĕр, степлерпа çирĕплететпĕр. Хăюсем тĕрлĕ анлăшлă пулмалла. Çӳлти пайĕнче – кĕске ярапаллă хăюсем. Хăюсене черетпе пĕр-пĕрин çине тăхăнтартса пыратпăр. Аялта чĕркенĕ хăюн диаметрĕ пысăкрах, çӳлелле пĕчĕкрех тумалла, лартса пынăçемĕн чăрăш çинçелсе пырать. Чăрăш хатĕр.

Чăрăша е ытти теттене ачасемпе пĕрле хатĕрлесессĕн савăнăç ытларах пулĕ. Хамăр алăпа хатĕрленĕ теттене тепĕр çул курупкăран кăларнă чухне аса илмешкĕн тата епле кăмăллă!

# ТЕЛЕРАДИОПРОГРАММА

раштав, 14-20

## 14 тунти кун

### 1 КАНАЛ

5.00 «Доброе утро»
9.00, 12.00, 15.00, 18.00, 1.00, 3.00 Новости
9.20, 4.20 «Контрольная закупка» 12+
9.50 «Жить здорово!» 12+
10.55, 3.20 «Модный приговор»
12.15 «Сегодня вечером» 16+
14.30, 15.15 «Время покажет» 16+
16.00 «Мужское / Женское» 16+
17.00 «Наедине со всеми» 16+
18.45 «Давай поженимся!» 16+
19.50 «Пусть говорят» 16+
21.00 «Время»
21.30 Т/с «ПЕТЛЯ НЕСТЕРОВА» 12+
23.30 «Вечерний Ургант» 16+
0.00 «Познер» 16+
1.20, 3.05 Х/ф «СУХОЕ, ПРОХЛАДНОЕ МЕСТО» 12+

### РОССИЯ 1

5.00, 9.15 Утро России
9.00, 11.00, 14.00, 17.00, 17.50, 20.00 Вести
9.55 «О самом главном»
11.35, 14.30, 17.30, 19.35 Местное время. Вести-Москва
11.55 Т/с «ТАЙНЫ СЛЕДСТВИЯ» 12+
14.50 Вести. Дежурная часть
15.00 «Наш человек» 12+
16.00 Т/с «ЗЕМСКИЙ ДОКТОР» 12+
18.15 «Прямой эфир» 16+
20.50 Спокойной ночи, малыши!
21.00 Т/С «ТАЙНЫ СЛЕДСТВИЯ-15» 12+
23.55 «Честный детектив» 16+
0.55 «Как убивали Югославию. Тень Дейтона» 12+
1.55 Ночная смена. «Россия без террора. Мусульманские святыни» «Прототипы. Горбатый. Дело Алексеева» 16+
3.30 Т/с «СЫН ЗА ОТЦА» 16+
4.25 Комната смеха

### ЧТВ

**6.07-6.10, 6.35-6.41 Вести-Чăваш ен**
**7.07-7.10, 7.35-7.41 Вести-Чувашия. Утро**
**8.07-8.10, 8.35-8.41 Вести-Чувашия. Утро**
**11.35-11.55 Вести-Чăваш ен**
**14.30-14.50 Вести-Чувашия**
**17.30-17.50 Вести-Чăваш ен**
**19.35-20.00 Вести-Чувашия**

### НТВ

5.00, 6.05 Х/ф «АДВОКАТ» 16+
6.00, 10.00, 13.00, 16.00, 19.00 Сегодня
7.00 «НТВ утром»
8.10 «Утро с Юлией Высоцкой» 12+
9.00 Т/с «ВОЗВРАЩЕНИЕ МУХТАРА» 16+
10.20 Т/с «ЛЕСНИК» 16+
12.00 Суд присяжных 16+
13.20 Обзор. Чрезвычайное происшествие
14.00 Т/с «УЛИЦЫ РАЗБИТЫХ ФОНАРЕЙ» 16+
16.20 Т/с «ЛИТЕЙНЫЙ» 16+
18.00 «Говорим и показываем» 16+
19.40 Х/ф «ДРУГОЙ МАЙОР СОКОЛОВ» 16+
21.30 Т/с «ПЯТНИЦКИЙ. ГЛАВА ЧЕТВЕРТАЯ» 16+
23.30 «Анатомия дня»
0.10 Т/с «ШАМАН» 16+
2.05 «Судебный детектив» 16+
3.15 Центр помощи «Анастасия» 16+

### ЧĂВАШ РАДИО «РАÇÇЕЙ РАДИО» КАНАЛĔПЕ

**6.10 Анонс передач**
**6.15 События**
**6.27 Салтак пăтти**
**6.40 Столичный курьер**
**6.54 Юрă çаврăмĕ**
**6.58-7.00 Погода**

* * *

**7.10 Çĕнĕ кĕнеке**
**7.33 Паянхи кун**
**7.37 Çула тухсан**
**7.51 Мы – вместе**
**7.58-8.00 Погода**

* * *

**12.10-13.00 День за днем. Радиожурнал**

* * *

**18.10 Çĕнĕ хыпарсем**
**18.24 От 2 до 5**
**18.29 Библия сегодня**
**18.39 Касхи юмах**
**18.49-19.00 Вести-Чувашия**

## 15 ытлари кун

### 1 КАНАЛ

5.00 «Доброе утро»
9.00, 12.00, 15.00, 18.00, 0.15, 3.00 Новости
9.20, 4.00 «Контрольная закупка» 12+
9.50 «Жить здорово!» 12+
10.55 «Модный приговор»
12.15, 21.35 Т/с «ПЕТЛЯ НЕСТЕРОВА» 12+
14.30, 15.15 «Время покажет» 16+
16.00 «Мужское / Женское» 16+
17.00 «Наедине со всеми» 16+
18.45 «Давай поженимся!» 16+
19.50 «Пусть говорят» 16+
21.00 «Время»
23.40 «Вечерний Ургант» 16+
0.30 «Структура момента» 16+
1.35, 3.05 Х/ф «ПРОЩАЙ, ЧАРЛИ» 16+

### РОССИЯ 1

5.00, 9.15 Утро России
9.00, 11.00, 14.00, 17.00, 17.50, 20.00 Вести
9.55 «О самом главном»
11.35, 14.30, 17.30, 19.35 Местное время. Вести-Москва
11.55 Т/с «ТАЙНЫ СЛЕДСТВИЯ» 12+
14.50 Вести. Дежурная часть
15.00 «Наш человек» 12+
16.00 Т/с «ЗЕМСКИЙ ДОКТОР» 12+
18.15 «Прямой эфир» 16+
20.50 Спокойной ночи, малыши!
21.00 Т/С «ТАЙНЫ СЛЕДСТВИЯ-15» 12+
23.55 Вести.doc 16+
1.40 Ночная смена. «Шифры нашего тела. Печень» «Смертельные опыты. Химия» 12+
3.15 Т/с «СЫН ЗА ОТЦА» 16+
4.10 Комната смеха

### ЧТВ

**6.07-6.10, 6.35-6.41 Вести-Чăваш ен**
**7.07-7.10, 7.35-7.41 Вести-Чувашия. Утро**
**8.07-8.10, 8.35-8.41 Вести-Чувашия. Утро**
**9.00 Утренний гость. Премьера (на чувашском языке)**
**9.40 Вспомни, солдат (на чувашском языке)**
**9.50-9.55 Наши сказки. Премьера**
**11.35-11.55 Вести-Чăваш ен**
**14.30-14.50 Вести-Чувашия**
**17.30-17.50 Вести-Чă!ваш ен**
**19.35-20.00 Вести-Чувашия**

### НТВ

5.00, 6.05 Х/ф «АДВОКАТ» 16+
6.00, 10.00, 13.00, 16.00, 19.00 Сегодня
7.00 «НТВ утром»
8.10 «Утро с Юлией Высоцкой» 12+
9.00 Т/с «ВОЗВРАЩЕНИЕ МУХТАРА» 16+
10.20 Т/с «ЛЕСНИК» 16+
12.00 Суд присяжных 16+
13.20 Обзор. Чрезвычайное происшествие
14.00 Т/с «УЛИЦЫ РАЗБИТЫХ ФОНАРЕЙ» 16+
16.20 Т/с «ЛИТЕЙНЫЙ» 16+
18.00 «Говорим и показываем» 16+
19.40 Т/с «ДРУГОЙ МАЙОР СОКОЛОВ» 16+
21.30 Т/с «ПЯТНИЦКИЙ. ГЛАВА ЧЕТВЕРТАЯ» 16+
23.30 «Анатомия дня»
0.10 Т/с «ШАМАН» 16+
2.05 Главная дорога 16+
2.40 Дикий мир 0+

### ЧĂВАШ РАДИО «РАÇÇЕЙ РАДИО» КАНАЛĔПЕ

**6.10 Вести-Чувашия**
**6.24 Анонс передач**
**6.26 Юрă çаврăмĕ**
**6.30 Певец земли чувашской**
**6.40 Столичный курьер**
**6.54 Юрă саламĕ**
**6.58-7.00 Погода**

* * *

**7.10 Вести-Чувашия**
**7.23 Паянхи кун**
**7.27 Будьте здоровы**
**7.37 Вăрçă ачисем**
**7.47 Олимпийские горизонты**
**7.55-8.00 Юрă çаврăмĕ**

* * *

**12.10-13.00 День за днем. Радиожурнал**

* * *

**18.10 Çĕнĕ хыпарсем**
**18.24 Остров молодых**
**18.39 Касхи юмах**
**18.49-19.00 Вести-Чувашия**

## 16 юн кун

### 1 КАНАЛ

5.00 «Доброе утро»
9.00, 12.00, 15.00, 18.00, 0.15, 3.00 Новости
9.20, 4.15 «Контрольная закупка» 12+
9.50 «Жить здорово!» 12+
10.55 «Модный приговор»
12.15, 21.35 Т/с «ПЕТЛЯ НЕСТЕРОВА» 12+
14.30, 15.15 «Время покажет» 16+
16.00 «Мужское / Женское» 16+
17.00 «Наедине со всеми» 16+
18.45 «Давай поженимся!» 16+
19.50 «Пусть говорят» 16+
21.00 «Время»
23.40 «Вечерний Ургант» 16+
0.30 К 100-летию Георгия Свиридова. «Время, вперед!» 16+
1.35, 3.05 Х/ф «ПОРОЧНЫЙ КРУГ» 16+

### РОССИЯ 1

5.00, 9.15 Утро России
9.00, 11.00, 14.00, 17.00, 17.50, 20.00 Вести
9.55 «О самом главном»
11.35, 14.30, 17.30, 19.35 Местное время. Вести-Москва
11.55 Т/с «ТАЙНЫ СЛЕДСТВИЯ» 12+
14.50, 4.45 Вести. Дежурная часть
15.00 «Наш человек» 12+
16.00 Т/с «ЗЕМСКИЙ ДОКТОР» 12+
18.15 «Прямой эфир» 16+
20.50 Спокойной ночи, малыши!
21.00 Т/С «ТАЙНЫ СЛЕДСТВИЯ-15» 12+
23.00 Специальный корреспондент 16+
0.40 Ночная смена. «Демократия массового поражения» «Бэкфайр», «Бьюти» и другие. Сто лет дальней авиации» 16+
2.55 Т/с «СЫН ЗА ОТЦА» 16+
3.50 Комната смеха

### ЧТВ

**6.07-6.10, 6.35-6.41 Вести-Чăваш ен**
**7.07-7.10, 7.35-7.41 Вести-Чувашия. Утро**
**8.07-8.10, 8.35-8.41 Вести-Чувашия. Утро**
**11.35-11.55 Вести-Чăваш ен**
**14.30-14.50 Вести-Чувашия**
**17.30-17.50 Вести-Чăваш ен**
**19.35-20.00 Вести-Чувашия**

### НТВ

5.00, 6.05 Х/ф «АДВОКАТ» 16+
6.00, 10.00, 13.00, 16.00, 19.00 Сегодня
7.00 «НТВ утром»
8.10 «Утро с Юлией Высоцкой» 12+
9.00 Т/с «ВОЗВРАЩЕНИЕ МУХТАРА» 16+
10.20 Т/с «ЛЕСНИК» 16+
12.00 Суд присяжных 16+
13.20 Обзор. Чрезвычайное происшествие
14.00 Т/с «УЛИЦЫ РАЗБИТЫХ ФОНАРЕЙ» 16+
16.20 Т/с «ЛИТЕЙНЫЙ» 16+
18.00 «Говорим и показываем» 16+
19.40 Т/с «ДРУГОЙ МАЙОР СОКОЛОВ» 16+
21.30 Т/с «ПЯТНИЦКИЙ. ГЛАВА ЧЕТВЕРТАЯ» 16+
23.30 «Анатомия дня»
0.10 Т/с «ШАМАН» 16+
2.05 Квартирный вопрос 0+
3.05 Центр помощи «Анастасия» 16+

### ЧĂВАШ РАДИО «РАÇÇЕЙ РАДИО» КАНАЛĔПЕ

**6.10 Вести-Чувашия**
**6.24 Анонс передач**
**6.26 Имею право**
**6.30 Ирхи концерт**
**6.40 Столичный курьер**
**6.54 Юрă çаврăмĕ**
**6.58-7.00 Погода**

* * *

**7.10 Вести-Чувашия**
**7.23 Паянхи кун**
**7.26 Диалоги о школе**
**7.37 Права потребителя**
**7.43-8.00 Çÿçсипе хупăлчи**

* * *

**12.10-13.00 Самое время. Прямой эфир**

* * *

**18.10 Çĕнĕ хыпарсем**
**18.24 Юрă çаврăмĕ**
**18.29 Будни ЖКХ**
**18.39 Чĕрĕ шыв**
**18.49-19.00 Вести-Чувашия**

## 17 кĕçнерни кун

### 1 КАНАЛ

5.00 «Доброе утро»
9.00, 11.30, 15.00, 18.00, 0.00, 3.00 Новости
9.25 «Жить здорово!» 12+
10.30, 3.35 «Модный приговор» 12+
12.00 Пресс-конференция Президента Российской Федерации Владимира Путина. Прямая трансляция
15.15 «Время покажет» 16+
17.00 «Наедине со всеми» 16+
18.50 Кубок Первого канала по хоккею. Сборная России - сборная Швеции. Прямой эфир
21.00 «Время»
22.00 Т/с «ПЕТЛЯ НЕСТЕРОВА» 12+
0.15 «Политика» 16+
1.20, 3.05 Х/ф «ЛЕВ» 12+

### РОССИЯ 1

5.00, 9.15 Утро России
9.00, 11.00, 15.00, 17.00, 17.50, 20.00 Вести
9.55 «О самом главном»
11.35, 17.30, 19.35 Местное время. Вести-Москва
12.00 Пресс-конференция Президента Российской Федерации Владимира Путина. Прямая трансляция
16.00 Т/с «ЗЕМСКИЙ ДОКТОР» 12+
18.15 «Прямой эфир» 16+
20.50 Спокойной ночи, малыши!
21.00 Т/С «ТАЙНЫ СЛЕДСТВИЯ-15» 12+
23.00 «Вечер с Владимиром Соловьевым» 12+
0.40 Ночная смена. «История нравов. Наполеон I» «История нравов. Наполеон III» 16+
2.35 «Летчик для Молотова. Один шанс из тысячи» 12+
3.35 Комната смеха

### ЧТВ

**6.07-6.10, 6.35-6.41 Вести-Чăваш ен**
**7.07-7.10, 7.35-7.41 Вести-Чувашия. Утро**
**8.07-8.10, 8.35-8.41 Вести-Чувашия. Утро**
**9.00 Военное детство. Премьера (на чувашском языке)**
**9.15 Активная молодежь. Премьера**
**9.30 Сельская жизнь. Премьера (на чувашском языке)**
**9.45-9.55 Спорт сильных. Премьера**
**11.35-12.00 Вести-Чăваш ен**
**17.30-17.50 Вести-Чăваш ен**
**19.35-20.00 Вести-Чувашия**

### НТВ

5.00, 6.05 Х/ф «АДВОКАТ» 16+
6.00, 10.00, 13.00, 16.00, 19.00 Сегодня
7.00 «НТВ утром»
8.10 «Утро с Юлией Высоцкой» 12+
9.00 Т/с «ВОЗВРАЩЕНИЕ МУХТАРА» 16+
10.20 Т/с «ЛЕСНИК» 16+
12.00 Суд присяжных 16+
13.20 Обзор. Чрезвычайное происшествие
14.00 Т/с «УЛИЦЫ РАЗБИТЫХ ФОНАРЕЙ» 16+
16.20 Т/с «ЛИТЕЙНЫЙ» 16+
18.00 «Говорим и показываем» 16+
19.40 Т/с «ДРУГОЙ МАЙОР СОКОЛОВ» 16+
21.30 Т/с «ПЯТНИЦКИЙ. ГЛАВА ЧЕТВЕРТАЯ» 16+
23.30 «Анатомия дня»
0.10 Т/с «ШАМАН» 16+
2.05 «Дачный ответ» 0+
3.10 Центр помощи «Анастасия» 16+
4.00 Т/с «ЧС - ЧРЕЗВЫЧАЙНАЯ СИТУАЦИЯ» 16+

### ЧĂВАШ РАДИО «РАÇÇЕЙ РАДИО» КАНАЛĔПЕ

**6.10 Вести-Чувашия**
**6.24 Анонс передач**
**6.26 Юхма енĕм – Патăрьел**
**6.31 Спорт площадки**
**6.40 Столичный курьер**
**6.54 Реплика**
**6.58-7.00 Погода**

* * *

**7.10 Вести-Чувашия**
**7.22 Паянхи кун**
**7.27-8.00 Открытая студия. Прямой эфир**

* * *

**12.10-13.00 День за днем. Радиожурнал**

* * *

**18.10 Çĕнĕ хыпарсем**
**18.24 Шăнкăрав**
**18.49-19.00 Вести-Чувашия**

## 18 эрне кун

### 1 КАНАЛ

5.00 «Доброе утро»
9.00, 12.00, 15.00, 18.00 Новости
9.20 «Контрольная закупка»
9.50 «Жить здорово!» 12+
10.55 «Модный приговор»
12.15 Т/с «ПЕТЛЯ НЕСТЕРОВА» 12+
14.30, 15.15 «Время покажет» 16+
16.00 «Мужское / Женское» 16+
17.00 «Жди меня»
18.45 «Человек и закон» 16+
19.50 «Поле чудес» 16+
21.00 «Время»
21.30 «Голос» 12+
0.00 «Вечерний Ургант» 16+
0.55 «Городские пижоны» «Фарго» 18+
2.00 Х/ф «СОВРЕМЕННЫЕ ПРОБЛЕМЫ» 16+
3.50 Х/ф «СЛАДКИЙ ЯД» 16+

### РОССИЯ 1

5.00, 9.15 Утро России
9.00, 11.00, 14.00, 17.00, 17.50, 20.00 Вести
9.55 «О самом главном»
11.35, 14.30, 17.30, 19.35 Местное время. Вести-Москва
11.55 Т/с «ТАЙНЫ СЛЕДСТВИЯ» 12+
14.50 Вести. Дежурная часть
15.00 «Наш человек» 12+
16.00 Т/с «ЗЕМСКИЙ ДОКТОР» 12+
18.15 «Прямой эфир» 16+
21.00 «Новая волна-2015» Гала-концерт
23.20 Х/ф «ГАДКИЙ УТЕНОК» 12+
3.15 «Урок французского. Мирей Матье, Джо Дассен и другие...» 12+
4.10 Комната смеха

### ЧТВ

**6.07-6.10, 6.35-6.41 Вести-Чăваш ен**
**7.07-7.10, 7.35-7.41 Вести-Чувашия. Утро**
**8.07-8.10, 8.35-8.41 Вести-Чувашия. Утро**
**9.00 Главная тема. Премьера**
**9.15 Мир искусства. Валентина Двойнова. Премьера (на чувашском языке)**
**9.45-9.55 Наши сказки. Премьера (на чувашском языке)**
**11.35-11.55 Вести-ПФО**
**14.30-14.50 Вести-Чувашия**
**17.30-17.50 Вести-Чăваш ен**
**19.35-20.00 Вести-Чувашия**

### НТВ

5.00, 6.05 Х/ф «АДВОКАТ» 16+
6.00, 10.00, 13.00, 16.00, 19.00 Сегодня
7.00 «НТВ утром»
8.10 «Утро с Юлией Высоцкой» 12+
9.00 Т/с «ВОЗВРАЩЕНИЕ МУХТАРА» 16+
10.20 Т/с «ЛЕСНИК» 16+
12.00 Суд присяжных 16+
13.20 Обзор. Чрезвычайное происшествие
14.00 Т/с «УЛИЦЫ РАЗБИТЫХ ФОНАРЕЙ» 16+
16.20 Т/с «ЛИТЕЙНЫЙ» 16+
18.00 «Говорим и показываем» 16+
19.40 Т/с «ДРУГОЙ МАЙОР СОКОЛОВ» 16+
23.30 «Большинство»
0.30 «Время Г» с Вадимом Галыгиным 18+
1.00 «Пятницкий. Послесловие» 16+
1.35 «Украсть у Сталина» 16+
2.45 Центр помощи «Анастасия» 16+

### ЧĂВАШ РАДИО «РАÇÇЕЙ РАДИО» КАНАЛĔПЕ

**6.10 Вести-Чувашия**
**6.24 Анонс передач**
**6.26 Чăваш тĕнчи**
**6.35 Юрă çаврăмĕ**
**6.40 Столичный курьер**
**6.54 Юрă çаврăмĕ**
**6.58-7.00 Погода**

* * *

**7.10 Вести-Чувашия**
**7.23 Паянхи кун**
**7.28 Из сводок МВД**
**7.38 Ăстаçă**
**7.48-8.00 Кăмăлтан. Ирхи концерт**

* * *

**12.10-13.00 День за днем. Радиожурнал**

* * *

**18.10 Çĕнĕ хыпарсем**
**18.25 Ăраскал**
**18.49-19.00 Вести-Чувашия**

## 19 шăмат кун

### 1 КАНАЛ

5.50 Т/с «НОЧНЫЕ ЛАСТОЧКИ» 12+
6.00, 10.00, 12.00, 18.00 Новости
6.10 «Ночные ласточки» 12+
8.00 «Играй, гармонь любимая!»
8.40 «Смешарики. Новые приключения»
9.00 «Умницы и умники» 12+
9.45 «Слово пастыря»
10.15 «Смак» 12+
10.55 «Ольга Аросева. Рецепт ее счастья» 12+
12.10 «Идеальный ремонт»
13.10 «Теория заговора» 16+
14.00 Кубок Первого канала по хоккею. Сборная России - сборная Финляндии. Прямой эфир
16.10, 18.10 «Голос» 12+
18.50 Праздничный концерт к Дню работника органов безопасности Российской Федерации. Трансляция из Государственного Кремлевского Дворца
21.00 «Время»
21.20 «Сегодня вечером» 16+
23.00 «Что? Где? Когда?» Зимняя серия игр
0.10 Кубок Первого канала по хоккею. Сборная Швеции - сборная Чехии
2.20 Х/ф «КАНКАН» 12+
4.45 «Мужское / Женское» 16+

### РОССИЯ 1

4.45 Х/ф «МОНРО» 12+
6.35 «Сельское утро»
7.05 Диалоги о животных
8.00, 11.00, 14.00 Вести
8.10, 11.10, 14.20 Местное время. Вести-Москва
8.20 МУЛЬТ утро
9.30 «Правила движения» 12+
10.25 «Личное. Борис Клюев» 12+
11.20 «Две жены» 12+
12.20, 14.30 Х/ф «ИЛЛЮЗИЯ СЧАСТЬЯ» 12+
16.40 «Знание - сила»
17.30 «Главная сцена» Полуфинал
20.00 Вести в субботу
21.00 Х/ф «МИРТ ОБЫКНОВЕННЫЙ» 12+
0.50 Х/ф «ЗАЕЗЖИЙ МОЛОДЕЦ» 12+
2.55 Х/ф «ПРИГОВОР» 12+
4.55 Комната смеха

### ЧТВ

**8.10 Вести-Чăваш ен**
**8.20-9.30 Для вас, любимые. Концерт по заявкам**
**14.20-14.30 Вести-Чувашия**

### НТВ

4.35 Т/с «ТАКСИСТКА» 16+
5.30, 0.55 Т/с «АГЕНТ НАЦИОНАЛЬНОЙ БЕЗОПАСНОСТИ» 16+
7.25 Смотр 0+
8.00, 10.00, 13.00, 16.00 Сегодня
8.15 «Жилищная лотерея Плюс» 0+
8.45 «Медицинские тайны» 16+
9.20 «Готовим с Алексеем Зиминым» 0+
10.20 Главная дорога 16+
11.00 Кулинарный поединок с Дмитрием Назаровым 0+
11.55 Квартирный вопрос 0+
13.20 «Я худею!» 16+
14.15 Своя игра 0+
15.00 «Мясо». «Еда живая и мертвая» 12+
16.20 Т/с «ЛИТЕЙНЫЙ» 16+
18.00 Следствие вели...16+
19.00 «Центральное телевидение» с Вадимом Такменевым
20.00 «Новые русские сенсации» 16+
21.00 Ты не поверишь! 16+
22.00 «50 оттенков. Белова» 16+
23.00 Х/ф «ОДИН ДЕНЬ» 16+
2.55 Дикий мир 0+
3.10 Центр помощи «Анастасия» 16+

### ЧĂВАШ РАДИО «РАÇÇЕЙ РАДИО» КАНАЛĔПЕ

**7.10 Вести-Чувашия**
**7.23 Анонс передач**
**7.25 Паянхи кун**
**7.31 Столичный курьер**
**7.42 С нами Бог**
**7.57-8.00 Юрă çаврăмĕ**

* * *

**12.10 Точка роста**
**12.28 Килте пĕсерер-ха**
**12.34-13.00 Эсир юратнă юрă-кĕвĕ**

* * *

**18.10-19.00 Юрă пултăр парне. Тÿрĕ эфир**

## 20 вырсарни кун

### 1 КАНАЛ

6.00, 10.00, 12.00 Новости
6.10 Т/с «НОЧНЫЕ ЛАСТОЧКИ» 12+
8.10 «Армейский магазин» 16+
8.45 «Смешарики. ПИН-код»
8.55 «Здоровье» 16+
10.15 «Непутевые заметки» 12+
10.35 «Пока все дома»
11.25 «Фазенда»
12.10 «Барахолка» 12+
13.00 «Гости по воскресеньям»
14.00 Кубок Первого канала по хоккею. Сборная России - сборная Чехии. Прямой эфир
16.10 «Аффтар жжот!» 16+
17.50 «Точь-в-точь» 16+
21.00 Воскресное «Время»
23.00 Х/ф «МЕТОД» 18+
1.00 Кубок Первого канала по хоккею. Сборная Финляндии - сборная Швеции
3.10 «Мужское / Женское» 16+
4.05 «Контрольная закупка»

### РОССИЯ 1

5.50 Х/ф «ГДЕ НАХОДИТСЯ НОФЕЛЕТ?» 16+
7.30 «Сам себе режиссер»
8.20 «Смехопанорама» Евгения Петросяна
8.50 Утренняя почта
9.30 «Сто к одному»
10.20 Местное время. Вести-Москва. Неделя в городе
11.00, 14.00 Вести
11.10 «Смеяться разрешается»
12.10 Х/ф «СОСЕДИ ПО РАЗВОДУ» 12+
14.20 Фильм-концерт «Пародии! Пародии! Пародии!!!» 16+
16.15 Х/ф «Я ВСЕ ПРЕОДОЛЕЮ» 12+
20.00 Вести недели
22.00 «Воскресный вечер с Владимиром Соловьевым» 12+
0.30 «Непобедимый. Две войны Кирилла Орловского» 12+
1.30 Х/ф «ПОЛЕТ ФАНТАЗИИ» 12+
3.35 «Гений разведки. Артур Артузов» 12+
4.35 Комната смеха

### ЧТВ

**10.20-11.00 Вести-Чувашия. События недели**

### НТВ

5.00 Т/с «ТАКСИСТКА» 16+
6.00, 1.00 Т/с «АГЕНТ НАЦИОНАЛЬНОЙ БЕЗОПАСНОСТИ» 16+
8.00, 10.00, 13.00, 16.00 Сегодня
8.15 «Русское лото плюс» 0+
8.50 Их нравы 0+
9.25 Едим дома 0+
10.20 «Первая передача» 16+
11.00 «Чудо техники» 12+
11.50 «Дачный ответ» 0+
13.20 «Поедем, поедим!» 0+
14.10 Своя игра 0+
15.00 «Нашпотребнадзор» Не дай себя обмануть! 16+
16.20 Т/с «ЛИТЕЙНЫЙ» 16+
18.00 «Акценты недели» Информационная программа
19.00 «Точка» с Максимом Шевченко
19.45 Х/ф «ИСПАНЕЦ» 16+
23.35 «Пропаганда» 16+
0.10 «ГРУ: тайны военной разведки» 16+
2.55 Дикий мир 0+
3.15 Центр помощи «Анастасия» 16+
4.05 Т/с «ЧС - ЧРЕЗВЫЧАЙНАЯ СИТУАЦИЯ» 16+
19.30 «Комеди Клаб» 16+
20.00 «Где логика?» 16+
21.00 «Однажды в России» 16+
22.00 «Stand Up» 16+
23.00 «Дом-2. Город любви» 16+

### ЧĂВАШ РАДИО «РАÇÇЕЙ РАДИО» КАНАЛĔПЕ

**7.10 Анонс передач**
**7.17 Паянхи кун**
**7.21 Столичный курьер**
**7.34 Здоровье**
**7.44 Çыравçăсем – ачасем валли**
**7.55-8.00 Юрă çаврăмĕ**

* * *

**8.00-9.00 Между Волгой и Уралом**

* * *

**12.10-13.00 Кайри – мала. Хит-парад**

* * *

**18.10-19.00 Ылтăн çÿçсерен**

## Перекетлĕ акăлчансем

Европăри тата Азири нумай çĕршывра централизациленĕ ăшăтмалли система çук. Европа çыннисем хĕлле сивĕрен мĕнле хÿтĕленеççĕ-ха?

Англире, тĕслĕхрен, нумай хутлă çуртсенче те кашни хăй пĕлнĕ пек ăшăнать. Унта кашни хваттертех бойлер – газ колонки – лартнă. Вăл хваттерте усă куракан шыва тата батарейсене ăшăтать. Кирлĕ вăхăтра хуçа ăшă батарейсене «ĕçлеттерме» пуçлать, кирлĕ мар чухне – сÿнтерет. Кирлĕ температурăна та хуçа хăй йĕркелет: майка вĕççĕн çÿресшĕн-и пÿлĕмре е ăшă çăм свитерпа çÿресси тивĕçтерет – хăрпăр хăйĕн кăмăлĕ. Паллах кăмăла йĕркелессине çын енчĕкĕн хулăнăшĕ витĕм кÿретех.

Пĕтĕмĕшле илсен, акăлчансен туалетпа ваннăй пÿлĕмĕсенче ăшă батарейсем çук. Çывăрмалли пÿлĕмсене те вăйлах ăшăтмаççĕ – перекетлеççĕ. Газ колонкин ĕçне йĕркелеме таймер вырнаçтараççĕ. Тĕслĕхрен, ирхине 7 сехетре тăмалла – бойлера 6.30-та вăйлăрах çунмалла лартаççĕ – вăраннă тĕле пÿлĕм ăшăнать. Пурте ĕçе тухса каяççĕ – бойлер вăйсăр ĕçлет, ĕçрен таврăнас вăхăт тĕлне пÿлĕме вăйлăрах ăшăтмалла лартаççĕ таймера.

Британин çак меслечĕ укçатенке перекетлеме тата экологи тĕлĕшпе аван пулнине палăртаççĕ экономистсемпе экологсем.

Электричествăпа е газпа тивĕçтерекен компанисене те çын хăй суйласа илме пултарать /машинăна хăш заправкăра бензинпа «апатлантарассине» суйланă пек/. Социаллă пурнăçа йĕркелекенсем халăха энергие мĕнле перекетлемелли пирки канаш параççĕ. Тĕслĕхрен: ● япала çумалли машинăна çурма бакпа ан ĕçлеттерĕр, бак туличчен, таса мар япала пуçтарăниччен, кĕтĕр. ● Телефона зарядкăра çĕрĕпе ан лартăр. ● Энерги перекетлекен лампăсемпе усă курăр. ● Ĕçлемен чухне компьютера яланах сÿнтерĕр. ● Ванна кĕрес вырăнне перекетлĕ душпа çăвăнăр тата ыт.те.

## Кулăш

**«Суллана епле ирттертĕм» сочинени конкурсĕнче Воркута хулинчи арçын ача çĕнтернĕ. Унăн сочиненийĕ икĕ сăмахран тăрать – Юр ăшĕнче!**

* * *

**– Иванов, сире ĕçрен кăларса яратăп!**

**– Тĕлĕнмелле, чурасене сутаççĕ тесе шухăшланăччĕ эпĕ.**

* * *

**Калăр-ха, тархасшăн, мĕншĕн çул-йĕр специалисчĕсем çул çине палăртнă «зебра» е ытти паллă икĕ-виçĕ уйăхранах çухалать. Çав çул çинех такам хăйĕн чун çунтармăшне юратни çинчен çырни икĕ çул тăрать-ха?**

Факс: /8352/ 28-83-70
E-mail: hypar2008@rambler.ru

РЕКЛАМА ПĔЛТЕРÿ

Адрес: 428019, Шупашкар хули, И.Яковлев проспекчĕ, 13-мĕш çурт, 316-мĕш пÿлĕм

Тел.: /8352/ 28-83-70, /8352/ 56-20-07

## ĔÇ / РАБОТА

**54.МОНОЛИТЧИКИ** в г. Йошкар-Ола. Куб – 2500 руб. Жилье, питание. Т.: 89176737773, 89625997773.

**126.Монолитчики, плотники,** монтажники, шлифовщики, **каменщики, сварщики.** Питание, спецодежда. Вахта. Тел. 8-925-002-22-38.

## ПУЛĂШУ / УСЛУГИ

**36.Известный чебоксарский экстрасенс, хиромант** – сниму порчу, поставлю защиту, помогу в решении семейных и финансовых проблем. Т. 89063808628.

**38.ЧИСТКА КОЛОДЦЕВ.** Т. 8-967-471-50-70.

**46.Бурение** колодцев, **углубление; продажа** и **д-ка** ж/б колец. bur.21.ru. Т. 89053434207.

**51.Бурение** колодцев, скважин; **кольца** колодезные высококачественные. Доставка. Тел.: 8-927-847-71-43, 89373790080.

**57.Свадьбы, юбилеи** – тамада, диджей, «Уяв». Т. 89373756378, Мила.

**77.НАТЯЖНЫЕ ПОТОЛКИ** – за 1 день. Т. 8-937-397-24-42.

**152.Бурение скважин** на воду. Т. 8-960-302-12-93.

**269.**Профессиональное **утепление домов ЭКОВАТОЙ и ПЕНОИЗОЛОМ.** Гарантия на монтаж. Новогодние скидки. Т. 89196691666.

**617.Бурение колодцев, скважин.** Т.: 89674703824, 89279905481.

**664.Утепление ЭКОВАТОЙ** домов, стен, чердаков, полов, мансард. **Скидки.** Т. 89176627164.

**745.Утепление домов ПЕНОИЗОЛОМ.** Гарантия. Скидки. Т. 380373.

**750.**Веселая **тамада.** Т. 89373935779.

## Саламлатпăр



*Юратнă шăллăма, кукkана – Çĕрпÿ районĕнчи Хурăнварта пурăнакан*
*__Анатолий Изосимович__*
***__ФИЛИППОВА__*** *–*
*юбилейпе чĕререн саламлатпăр.*
*Пурăн ĕмĕр чирлемесĕр,*
*Патăр Турă ыр кун-çул.*
*Çут хĕвел пек йăл кул эсĕ,*
*Яланах телейлĕ пул.*
*Нихăçан вăй-хал ан чактăр,*
*Пултăр ăнăçу ялан.*
*Пурте ăшшăн саламлатпăр*
*Ыр сунса сана чунтан.*
*__Пиччĕшĕ тата унăн çемйи.__*

## ТУЯНАТĂП / КУПЛЮ

**18.Бычков, тёлок, коров,** лошадей. Т. 8-962-599-47-06.

**39.Коров, бычков и лошадей.** Т. 8-960-310-98-78.

**50.Коров.** Т. 89278508564.

**403.КРС** – по высоким ценам. Т. 8-906-132-76-04.

**774.Макулатуру, плёнку.** Самовывоз. Т. 8-965-687-75-57.

**799.Морковь, свеклу** красную, **лук** репч. Т. 8-965-685-55-78.

**800.Дом** в любом состоянии. Т. 8-902-663-90-45.

## С У Т А Т Ă П / П Р О Д А Ю

**1.Качественную** фабричную **МЕБЕЛЬ** по доступным ценам: стенки, прихожие, шкафы, комоды, столы, кровати. Доставка, сборка. Скидки, рассрочка. Салон «Express Комфорт»: м-н «Экспресс»; вещ. рынок «Ярмарка»; МТВ-Центр – 4-й эт.; «Северная» ярмарка Т.: 46-55-44, 8-953-899-82-24. **Сайт:** www.ex-comfort.ru.

**2.АКЦИЯ! БЛОКИ КЕРАМЗИТОБЕТОННЫЕ,** пропаренные, вибропрессованные 20х20х40 – 32 руб., 12х20х40 – 27 руб., 9х20х40 – 23 руб. Высокое качество. Доставка манипулятором. **Т. 8-960-307-31-51.**

**3.АКЦИЯ! КОЛЬЦА** железобетонные для колодцев и канализаций 0,7; 1; 1,5м. Бурение. Д-ка манипул-м. **Т. 8-960-307-31-51.**

**4.Пластиковые ОКНА** и натяжные **потолки.** Низкие цены. замер. Д-ка. Т. 8-927-668-43-82.

**5.БЛОКИ** керамзитобетонные 20х20х40, 12х20х40, 9х20х40 пропаренные, гидро-вибропрессованные, заводские от производителя – недорого, **цемент, песок.** Доставка. Разгрузка. Без выходных. Кассовый чек, **документы.** Т. 8-960-301-63-74.

**7.ГРАВМАССУ, песок, щебень, керамзит.** Д-ка. Т. 8-927-668-97-13.

**8.Гравмассу,** песок, **щебень,** торф, кирпбой, **керамблок, керамзит.** Пенсионерам, уч. ВОВ скидки. Т. 8-905-199-01-22.

**9.ГРАВМАССCУ, песок, щебень, керамзит.** Дешево. Т. 89033583021.

**10.Сетку**-рабицу от производителя – более 80 видов, **сетку** сварную – более 30 видов, **профнастил,** гвозди, **столбы,** проволку. Изготовление ворот, калиток. Доставка. Выездная сварка /генератор/. Грузоперевозки. Т.: 68-05-67, 34-70-70.

**11.Срубы на заказ.** Т. 37-28-74.

**12.Профнастил,** металлочерепицу, **оцинковку** рул., листовую, трубы профильные, водостоки, **металлосайдинг. Согнём** любые доборные элементы для кровли и фасада. Т. 44-44-33.

**15.Кирпич, БЛОКИ.** Т. 8-961-339-33-63.

**20.КИРПИЧ** – 50 видов. Д-ка. **Новогодние скидки.** Т. 89276678378.

**21.Керамблоки, гравмассу, песок.** Т.: 8-903-345-63-07, 8-917-675-75-28.

**22.Немецкие ПЛАСТИКОВЫЕ ОКНА.** Низкие цены. Пенсионерам скидки. Замер, доставка – бесплатно. Без вых. **Т. 8-927-855-83-55.**

**24.ГРАБЛИ,** косилки, сажалки, **копалки,** окучники, опрыскиватели, погрузчики, БДФ. **Низкие цены.** Доставка. Т. 89278533596.

**26.КЕРАМБЛОКИ** /20х20х40, 12х20х40, 10х20х40/, **керамзит** в мешках, **цемент,** кирпич, **колодезные КОЛЬЦА.** Т. 89033468556.

**29.Косилки,** грабли, фрезы, погрузчики, опрыскиватели, **картофелесажалки,** доильные аппараты. **ОПТОВЫЕ ЦЕНЫ! ДОСТАВКА!** Т.: 89379559802, 89373758095.

**30.Гравмассу, песок, щебень, керамзит.** Д-ка. Т. 89053465671.

**33.КИРПИЧ М125, М150; керамблок.** Доставка. Т. 89033220208.

**34.Гравмассу,** песок, **щебень.** Услуги крана. Доставка до 25 тн. Т.: 89176500385, 89603073399.

**35.**Пластиковые **ОКНА,** металлические **ДВЕРИ.** Бесплатно: замер, доставка, демонтаж. **Гарантия** 15 лет. **Рассрочка.** Скидки. Т. 8-937-391-39-91.

**40.ПИЛОМАТЕРИАЛ** /хвоя, береза, дуб, липа, осина/, **срубы, дрова, горбыль.** Т. 8-903-389-14-00.

**42.Керамблоки** 12х20х40, 20х20х40, **кольца колодезные** - диам. 1,5 м; 1 м; 0,8 м; 0,7 м; 0,45 м. Доставка. **Бурение.** Т.: 8-987-666-41-40, 8-937-010-01-41.

**75.Дымоходные трубы** из нерж. стали. Аргонная сварка, медь, нержавейка. Т. 44-44-33.

**76.Срубы** с комплектацией "под ключ". **Липовые срубы** – на заказ. Доставка. Т. 89379528467, Владимир.

**79.ПРИЦЕП трактора.** Т. 8-905-344-47-35.

**93.Кирпич красный** одинарный, полуторный, силикатный, облицовочный /все цвета/, половняк, **КББ** /20х20х40, 20х12х40/, **гравмассу,** керамзит. Доставка. Разгрузка кран-манипулятором. Т.: 44-20-97, 89033582097.

**154.ОКНА и ПОТОЛКИ** – немецкое качество. Монтаж по ГОСТу. Пенсионерам скидки. Рассрочка. Т. 89176627164.

**241.Бетон,** раствор с зимней добавкой, **фунд. блоки,** плиты перекрытия, перемычки, **доски.** Д-ка. Дешево. Т. 89278535732.

**679.Керамблок** (20х20х40, 12х20х40, 9х20х40), колодезные кольца, гравмассу, песок, керамзит. Доставка. Т. 89033226846.

**727.Керамзитобетонные БЛОКИ** 20х20х40, 12х20х40, пропаренные. Доставка манипулятором. Т.: 89050284130, 89033462293.

**759.**Тĕрлĕ тĕслĕ лайăх таптарнă **кĕрхи çăм.** Т. 89170664146.

**783.СТАНКИ** для валяния валенок. Т. 8-937-381-05-85.

**796.**Домашнюю **свинину** и **свежее сало.** Т. 8-927-851-31-74.

**797.КВАРТИРЫ** в Чебоксарах **от 1 млн. руб.** Ипотека. Т. /8352/ 37-27-23, 8-927-667-01-19.

**805.Зааненски ăратри** 4 çулти **КАЧАКА ТАКИ** – Çĕмĕрле р-че. Т.: 89876708345, 89176574107.

**814.БОЧКИ** 200 л., металлические с крышкой, хомутом. **Т.89613429059.**

**815.КОЛЬЦА колодезные** 0,7м; 1,0м; 1,5м. Т. 89278416247.

**816.ПĂРУ** ( 6 уйăхра). Т. 89373980874.

**821.Кирпичный ДОМ** с надворными постройками – **в Моргаушском районе.** Т. 89656824848.

**822.Комнату в г. Чебоксары** по Эгерскому бульвару, д. 3, площадью 13,6 кв.м. Цена 750 тыс. руб., можно с привлечением капитала. Тел. 8-919-664-17-55.

**825.СЕНО** в тюках. Т. 89373744701.

**828.Блоки КБ** от 30 руб., **доски** обрезные от 5500 руб., **песок,** ОПГС, **щебень.** Доставка. Услуги манипулятора. Т.: 8-903-345-53-24, 8-903-322-25-32.

ИЗДАТЕЛЬСТВО ÇУРЧĔ ХЫПАР ИЗДАТЕЛЬСКИЙ ДОМ

Учредитель: Чăваш Республикин Информаци политикипе массăллă коммуникацисен министерствин “Хыпар” Издательство çурчĕ” Чăваш Республикин хăй тытăмлă учрежденийĕ

КИЛ-ÇУРТ, ХУШМА ХУÇАЛĂХ

Çырăнмалли индекс: 54806

Директор-тĕп редактор тивĕçĕсене пурнăçлакан М.М.АРЛАНОВ
Редактор Э.Н.ИВАНОВА

РЕДАКЦИПЕ ИЗДАТЕЛЬ АДРЕСĔ:
428019, Шупашкар хули, Иван Яковлев проспекчĕ, 13, Пичет çурчĕ, III хут, “Кил-çурт, хушма хуçалăх”.

ЫЙТСА ПĔЛМЕЛЛИ ТЕЛЕФОНСЕМ:
56-15-30, 56-00-67.
коммерци дирекцийĕ:
28-83-70,
56-20-07 – инспекторсем.

Факс: /8352/ 28-83-70.
Электронлă почта:
hypar@mail.ru

hypar2008@rambler.ru
hyparkd@mail.ru

Хаçата Федерацин çыхăну, информаци технологийĕсен тата массăллă коммуникацисен сферинчи надзор службинче /Роскомнадзор/ 26.04.2013 ç. ПИ ФС77-53799 №-пе регистрациленĕ.

09.12.2015. Пичете графикпа 19 сехет те 30 минутра алă пусмалла. 16 сехетре алă пуснă.

Хаçата «Хыпар» Издательство çурчĕ» АУ техника центрĕнче калăпланă, «Чăваш Ен» ИПК АУО типографийĕнче пичетленĕ. 428019, Шупашкар хули, И.Яковлев проспекчĕ, 13. 64-24-01 – издательство директорĕ.

Тираж 15872. Заказ 4769.